28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
МАЙ
1
ЫТЛАРИКУН
8(6834) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА
СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Верховный Главнокомандующин

ПРИКАЗӖ

1945 ҫулхи майӑн 1-мӗшӗ. № 20. Мускав хули.

Юлташсем—красноармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсемпе старшинасем, ҫарпа флотӑн офицерӗсем, генералсемпе адмиралсем!

Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем!

Паян пирӗн ҫӗршыв Майӑн пӗрремӗшне—ӗҫҫыннисен пӗтӗм тӗнчери праҫникне—уявласа ирттерет.

Кӑҫалхи ҫул пирӗн Тӑван ҫӗршыври халӑхсем Майӑн пӗрремӗшне Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑ ҫӗнтерӳлӗн вӗҫленсе пынӑ кунсенче уявлаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫар Мускавпа Ленинград патӗнче, Грознӑйпа Сталинград патӗнче тӑшман ҫарӗсенчен хӳтӗленсе ҫапӑҫнӑ йывӑр вӑхӑтсем ӗмӗрлӗхех иртсе кайрӗҫ, урӑх вӗсем нихӑҫан та таврӑнмӗҫ. Халӗ ӗнтӗ пирӗн ҫӗнтерӳллӗ ҫарсем тӑшманӑн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене Германи вӑтаҫӗрӗнче, Берлин леш енче нумай инҫетре, Эльба шывӗ ҫинче аркатса пыраҫҫӗ.

Кӗске вӑхӑт хушшинче Польшӑна, Венгрие, Чехословакин пысӑкрах пайне, Австрин чылай пысӑк пайне, Австри столицине—Вена хулине—ирӗке кӑларнӑ.

Хӗрлӗ Ҫар ҫакӑнпа пӗрлех Хӗвелтухӑҫ Пруссие—нимӗҫ империализмӗн йӑвине,—Померание, Бранденбургӑн чылай пысӑк пайне тата Германи столицин Берлин хулин тӗп районӗсене турта-турта илчӗ, Берлин хули ҫине ҫӗнтерӳ ялавне ҫӗклесе лартрӗ.

Хӗрлӗ Ҫар ҫавӑн пек ҫапӑҫса малалла тапӑнса пынине пула, нимӗҫсен виҫӗ-тӑватӑ уйӑх хушшинче 800.000 салтакӗпе офицерӗ ытла тыткӑна лекнӗ тата пӗр миллиона яхӑн ҫынни вилсе пӗтнӗ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех Хӗрлӗ Ҫарӑн чаҫӗсем тӑшманӑн 6.000 ҫити самолетне, 12.000 ҫити танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине, 23.000 ытла хир туппине тата ытти тӗрлӗ хӗҫпӑшалсемпе ҫар хатӗрӗсене тытса илчӗҫ е пӗтерсе тӑкрӗҫ.

Ҫакна палӑртмалла: ҫав ҫапӑҫусенче Хӗрлӗ Ҫарпа ҫумма-ҫуммӑн тӑрса, Польшӑн, Югославин, Чехословакин, Болгарин тата Румынин дивизийӗсем пӗтӗмӗшпе тӑшмана хирӗҫ ӑнӑҫлӑн тапӑнса пычӗҫ.

Хӗрлӗ Ҫар аркатмаллах пыра-пыра ҫапнине пула, нимӗҫ командованийӗн Совет Союзӗпе Германи фронтне ирӗксӗрех вуншар дивизи куҫарса килме, ытти фронтсенчи чылай участоксене пӗтӗмӗшпех пушатса хӑварма лекрӗ. Ҫав ларутӑру пирӗн союзниксен ҫарӗсене хӗвеланӑҫӗнче ӑнӑҫлӑ наступлени пуҫласа яма май пачӗ. Ҫакӑнпа пӗрлех союзниксен ҫарӗсемпе Хӗрлӗ Ҫар, нимӗҫ ҫарӗсене хӗвелтухӑҫӗпе хӗвеланӑҫӗнчен пӗр вӑхӑтрах пыра-пыра ҫапса, нимӗҫ ҫарӗсене пӗрпӗринчен татӑлнӑ икӗ пая уйӑрса пӑрахма пултарчӗҫ, пирӗн ҫарсемпе союзниксен ҫарӗсем пӗрлӗхлӗ фронта пӗрлешме пултарчӗҫ.

Нимӗнле иккӗленӳ те пулма пултараймасть: ҫак лару-тӑру гитлерла Германи пӗтнине пӗлтерет.

Гитлерла Германин шутлӑ кунсем юлчӗҫ. Ун территорийӗн ҫуррине ытла Хӗрлӗ Ҫарпа пирӗн союзниксен ҫарӗсем йышӑнса илчӗҫ. Германи чи паха районсемсӗр тӑрса юлчӗ. Гитлеровецсен аллинче тытӑнса юлнӑ промышленность нимӗҫ ҫарне хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем тата горючи ҫителӗклӗ таран парса тӑма пултараймасть. Нимӗҫ ҫарӗн ҫын резервӗсем пӗтсе ҫитнӗ. Германи, унӑн союзницине Япони шута илмесен, тӑр-пӗччен тӑрса юлчӗ.

Хайсен шанчӑксӑр лару-тӑрӑвӗнчен мӗнле те пулин хӑтӑлса тухмалли майсем шыраса, союзниксен лагерӗнче хирӗҫӳсем кӑларма тӑрӑшса, гитлерла авантюристсем тӗрлӗ фокуссем туса хӑтланаҫҫӗ, союзниксене илӗртме те хӑтланаҫҫӗ. Гитлеровецсен ҫав ҫӗнӗ жуликла хӑтланӑвӗсем пӗтӗмпех путланса ларас шӑпа умӗнче тӑраҫҫӗ. Вӗсем нимӗҫ ҫарӗсем арканса каяссине хӑвартлатма кӑна пултараҫҫӗ.

Пӗрлешнӗ Нацисен ҫарӗсем Германи халӑхне вӗлерсе пӗтерме шутлаҫҫӗ текен ухмахла юмахсем сарса, фашистсен ултавлӑ пропаганди нимӗҫ халӑхне хӑратма пӑхать. Пӗрлешнӗ Нацисем Германи халӑхне пӗтерсе тӑкас задача партмаҫҫӗ. Пӗрлешнӗ Нацисем фашизма тата Германи милитаризмне пӗтерсе тӑкаҫҫӗ, вӑрҫӑшӑн айӑплӑ ҫынсене хаяр наказани параҫҫӗ тата нимӗҫсене вӗсем ытти ҫӗршывсене кӳнӗ сиенсемшӗн тӳлеттереҫҫӗ. Анчах, нимӗҫ халӑхӗ союзниксен ҫар влаҫӗсем ыйтнисене кӑмӑллӑн пурнӑҫласа пырсан, Пӗрлешнӗ Нацисем Германин мирлӗ халӑхне тивмеҫҫӗ тата тивмӗҫ те.

Совет ҫарӗсем Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра тунӑ чаплӑ ҫӗнтерӳсем Хӗрлӗ Ҫарӑн улӑпла хӑватне тата унӑн вӑрҫӑри пысӑк мастерлӑхне кӑтартса пачӗҫ. Пирӗн Тӑван ҫӗршыв вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра хамӑр халӑхӑн социализмлӑ аслӑ ҫӗнтерӗвӗсене хӳтӗлесе хӑварма пултаракан тата Совет Союзӗн государство интересӗсене сыхлама пултаракан чи лайӑх кадровӑй ҫар туса хучӗ.

Совет Союзӗ халиччен пулман ҫав тери пысӑк вӑрҫӑра тӑватӑ ҫула яхӑн вӑрҫать пулин те, ку вӑрҫӑ питӗ пысӑк вӑй хума хушать пулин те, пирӗн социализмлӑ экономика ҫирӗпленсе, ӳссе пырать, ирӗке кӑларнӑ облаҫсенчи хуҫалӑх, нимӗҫ захватчикӗсем ҫаратса тата ишӗлтерсе пӗтернӗ хуҫалӑх, ӑнӑҫлӑн та хӑвӑрт юсанса ура ҫине тӑрать. Ҫакӑ вӑл большевиксен аслӑ партийӗ хавхалантарса пыракан пирӗн ҫӗршыври рабочисемпе колхозниксем, совет интеллигенцийӗ, хӗрарӑмсемпе ҫамрӑксем геройла вӑй хурса ӗҫленин результачӗ пулса тӑрать.

Германи империалисчӗсем пуҫласа янӑ пӗтӗм тӗнчери вӑрҫӑ пӗтсе пырать. Гитлерла Германи чи ҫывӑх вӑхӑтрах арканса каять. Хӑйсене тӗнче тытса тӑракансем вырӑнне шутланӑ гитлерла пуҫлӑхсем ҫӗмрӗк такана умӗнче тӑраҫҫӗ. Вилмеллех аманнӑ фашистла тискер кайӑк юлашки сывлӑшпа сывлать. Халӗ ӗнтӗ пӗр задача кӑна—фашистла тискер кайӑка пуҫӗпех ҫапса вӗлерес задача кӑна тӑрать.

ХӖРЛӖ ҪАРПА ТИНӖС-ҪАР ФЛОЧӖН ВОИНӖСЕМ!

Гитлеровецсен йӑвине юлашки хут штурмлас ӗҫ пырать. Юлашки ҫапӑҫусенче вӑрҫӑри ӑсталӑхпа паттӑрлӑхӑн ҫӗнӗ тӗслӗхӗсене кӑтартса парӑр. Тӑшмана вирлӗнрех пыра-пыра ҫапӑр, унӑн оборонине пултаруллӑн ҫӗмӗрӗр, нимӗҫ захватчикӗсене хыҫранах хӑваласа пырӑр, вӗсене ҫавӑра-ҫавӑра илӗр, вӗсем хирӗҫ тӑма пӑрахиччен вӗсене сывлӑш ҫавӑрса илме ан парӑр.

Тӑван ҫӗршыв тулашӗнче чухне уйрӑмах сыхӑлӑхлӑ пулӑр!

Совет воинӗн чысӗпе тивӗҫлӗхне малтанхи пекех ҫӳлте тытӑр!

СОВЕТ СОЮЗӖНЧИ ӖҪҪЫННИСЕМ!

Тимлӗн те ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлесе, фронта пур енчен те пулӑшассине вӑйлатса пырӑр. Ҫӗршыва вӑрҫӑ кӳнӗ сурансене хӑвӑртрах тӳрлетӗр, хамӑрӑн Совет государствин хӑватне татах та ҫӳлерех ҫӗклӗр!

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсемпе старшинасем, ҫарпа флотӑн офицерӗсем, генералсемпе адмиралсем!

Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем!

Совет Правительстви тата пирӗн большевиксен партийӗ ячӗпе Сире Майӑн Пӗрремӗш кунӗ ҫитнӗ май саламласа ырӑ сывлӑх сунатӑп!

Хӗрлӗ Ҫар фронтра тунӑ историллӗ ҫӗнтерӳсене тата рабочисемпе колхозниксен, интеллигенцин тылри аслӑ ҫитӗнӗвӗсене чыслаcа, ӗҫҫыннисен пӗтӗм тӗнчери праҫникне палӑртса хӑварас тесе—

ҪАПЛА ПРИКАЗ ПАРАТӐП:

Паян, Майӑн 1-мӗшӗнче, Союзлӑ республикӑсен столицисенче: Мускавра, Киевра, Минскра, Бакура, Тбилиссире, Ереванра, Ашхабадра, Ташкентра, Сталинабадра, Алма-Атара, Фрунзере, Петрозаводскра, Кишиневра, Вильнюсра, Ригӑра, Таллинра, ҫавӑн пекех тата герой-хуласенче—Ленинградра, Сталинградра, Севастопольре тата Одессӑра артиллерирен ҫирӗм хут пӗр харӑс персе салют памалла.

Сывӑ пултӑр пирӗн хӑватлӑ Советлӑ Тӑван Ҫӗршыв!

Сывӑ пултӑр аслӑ Совет халӑхӗ, халӑх-ҫӗнтерӳҫӗ!

Сывӑ пулччӑр ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗ!

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Гитлерла Германие тӑтӑклӑнах ҫапса аркатассишӗн — малалла!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ
Фронт штабӗн начальникне
Генерал-полковника БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, паян, апрелӗн 30-мӗшӗнче, ГРАЙФСВАЛЬД, ТРЕПТОВ, НОЙШТРЕЛИТЦ, ФЮРСТЕНБЕРГ, ГРАНЗЕЕ хулисене — ПОМЕРАНИН ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ пайӗнчи тата МЕКЛЕНБУРГРИ ҫулсен паха узелӗсене—туртса илнӗ.

Асӑннӑ хуласене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-полковникӑн, БАТОВ генерал-полковникӑн, ГРИШИН генерал-полковникӑн, КОКОРЕВ генерал-лейтенантӑн, БОБКОВ генерал-лейтенантӑн, КИНОСЯН генерал-лейтенантӑн, ПОЛЕНОВ генерал-лейтенантӑн, ФЕТИСОВ генерал-майорӑн, ЧУВАКОВ генерал-лейтенантӑн, ЭРАСТОВ генерал-лейтенантӑн, АЛЕКСЕЕВ генерал-лейтенантӑн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-лейтенантӑн, СМИРНОВ генерал-лейтенантӑн, КОЛЧАНОВ генерал-майорӑн, ЛЯЩЕНКО генерал-майорӑн, БОРШЕВ генерал-майорӑн, ЧЕСНОКОВ полковникӑн, ДЖАНДЖГАВА генерал-майорӑн, СКОРОБОГАТКИН генерал-майорӑн, БОРИСОВ генерал-майорӑн, ТЕРЕМОВ генерал-майорӑн, ГРЕБЕННИК генерал-майорӑн, МАКАРОВ генерал-майорӑн, ВАРОХИН полковникӑн, АФАНАСЬЕВ полковникӑн, ВЕЛИЧКО полковникӑн, ГУСЕВ генерал-майорӑн, СУПРУНОВ генерал-майорӑн, МЕЛЬДЕР полковникӑн, ШЕПЕЛЬ полковникӑн, ЕМЕЛЬЯНЕНКО полковникӑн, ЧЕТВЕРТУХИН полковникӑн ҫарӗсем; ОСЛИКОВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ЧЕПУРКИН генерал-майорӑн, БРИКЕЛЬ генерал-майорӑн, КАЛЮЖНЫЙ генерал-майорӑн кавалерисчӗсем; артиллери генерал-полковникӗн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-майорӗн КАЗАКОВӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн МИХЕЛЬСОНӐН, артиллери генерал-майорӗн РАЗИНЦЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн РОГОЗИНӐН, артиллери генерал-майорӗн КОРОЧКИНӐН, ЛЕОНОВ полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн ГНИДИНӐН, АКИМУШКИН полковникӑн, ТЮРИН полковникӑн, ВОЙЦЕХОВСКИЙ подполковникӑн, СЫРОВАТКИН полковникӑн, МАЛЯВСКИЙ полковникӑн, СУКАЧЕВ полковникӑн, ОСТАНЬКОВИЧ полковникӑн, АНАНИЧ подполковникӑн, ЖЕЛНОВАЧ подполковникӑн, КУДЫМОВ подполковникӑн, САЛИТАН полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ЧЕРНЯВСКИН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ПАНОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн НОВАКӐН, ДОРОПЕЙ полковникӑн, ЮДИН полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ФИРСОВИЧӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ШУЛЬГИНӐН, ПЕТРОВ подполковникӑн, КОНОВАЛОВ полковникӑн, ИГОНИН полковникӑн, ЛОМАКО полковникӑн, ГОРБЕНКО полковникӑн, РАЗИН подполковникӑн, ЮРЕВИЧ полковникӑн, СЛОБОДЯН подполковникӑн, ШЕВЧЕНКО подполковникӑн, ГОРБУНОВ полковникӑн, ЖАБИН майорӑн, ЛОЖКИН полковникӑн, СОКОЛОВ полковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ВЕРШИНИНӐН, авиаци генерал-майорӗн АЛЕКСЕЕВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн БАЙДУКОВӐН, авиаци генерал-майорӗн ГЕТЬМАНӐН, ВОЛКОВ полковникӑн, ГРИЩЕНКО полковникӑн, ДОДОНОВ полковникӑн, СМОЛОВИК полковникӑн, РЫБАКОВ полковникӑн, ПОКАЕВОЙ полковникӑн, ХАРЛАМОВ майорӑн, БЕЗУГЛОВ полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БЛАГОСЛАВОВӐН, КУРОВ полковникӑн, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ШВЫДКОЙӐН, ТРЕТЬЯКОВ полковникӑн, БАБАЕВ полковникӑн, ГУЛЬТЯЕВ подполковникӑн, ШИТИКОВ полковникӑн, МИРОТВОРСКИЙ полковникӑн, ВИНЬКОВ полковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БОРЗОВӐН, БАХИЛИН полковникӑн, БОРИСОВ полковникӑн, ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн НОВАРЧУКӐН связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ГРАЙФСВАЛЬД, ТРЕПТОВ, НОЙШТРЕЛИТЦ, ФЮРСТЕНБЕРГ, ГАНЗЕЕ хулисене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, апрелӗн 30-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, иксӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, асӑннӑ хуласене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, асӑннӑ хуласене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи апрелӗн 30-мӗшӗ. № 352.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 4-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Арми генералне ЕРЕМЕНКӐНА
Фронт штабӗн начальникне
Генерал-полковника САНДАЛОВА

УКРАИНАРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем, паян, апрелӗн 30-мӗшӗнче, МОРАВСКАЯ ОСТРАВА хулине—промышленноҫлӑ пысӑк центра тата нимӗҫсен ЧЕХОСЛОВАКИРИ оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне—штурмласа туртса илнӗ.

Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах фронт ҫарӗсем ЖИЛИНА хулине — Хӗвеланӑҫ Карпат тӑрӑхӗнчи ҫулсен паха узелне—туртса илнӗ.

МОРАВСКАЯ ОСТРАВА тата ЖИЛИНА хулисене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: МОСКАЛЕНКО генерал-полковникӑн, ГРЕЧКО генерал-полковникӑн, КУРОЧКИН генерал-полковникӑн, ГАСТИЛОВИЧ генерал-лейтенантӑн, БАТЮНЯ генерал-лейтенантӑн, ГОНЧАРОВ генерал-майорӑн, БРИЛЕВ генерал-майорӑн, чехословаксен бригада генералӗ КЛАФАЛЕК ертсе пыракан корпусӗн, БОНДАРЕВ генерал-лейтенантӑн, БУШЕВ генерал-майорӑн, ЗАПОРОЖЧЕНКО генерал-лейтенантӑн, ГОРДЕЕВ генерал-лейтенантӑн, ВЕДЕНИН генерал-майорӑн, ТЕРТЫШНЫЙ генерал-майорӑн, ОЗИМИН генерал-лейтенантӑн, МЕЛЬНИКОВ генерал-майорӑн, СОЛОВЬЕВ генерал-майорӑн, ЖУКОВ генерал-майорӑн, ФАДЕЕВ генерал-майорӑн, МЕДВЕДЕВ генерал-лейтенантӑн, ВАСИЛЕВСКИЙ генерал-майорӑн, КРАПОТИН генерал-майорӑн, ГРЕДИНАРЕНКО полковникӑн, ВАСИЛЬЕВ полковникӑн, ДРЯХЛОВ полковникӑн, ИВАНОВСКИЙ генерал-майорӑн, МЕТАЛЬНИКОВ генерал-майорӑн, БОРИСОВ генерал-майорӑн, ЗУБОВ генерал-майорӑн, КАЗАРИНОВ полковникӑн, ЧЕРНЫЙ полковникӑн, МИТОЯН полковникӑн, КУПЦОВ полковникӑн, КАВЕРИН полковникӑн, БЕЖКО генерал-майорӑн, ЯНКОВСКИЙ генерал-майорӑн, ХОМИЧ полковникӑн, ГЕРШЕВИЧ полковникӑн, ГРЕЧКОСИЙ полковникӑн, ГРИНЧЕНКО генерал-майорӑн, КОЛДУБОВ генерал-майорӑн, ЛИСИНОВ генерал-майорӑн, ГЛАДКОВ генерал-майорӑн, ВИНОГРАДОВ полковникӑн, УГРЮМОВ полковникӑн, ВАСИЛЬЕВ полковникӑн, БРОЖ полковникӑн, СЕЛЬНЕР полковникӑн, МАРКУС полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн КАРИОФИЛЛИН, СМИРНОВ полковникӑн, ДАВЫДОВ полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн КАБАТЧИКОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ИВАНОВӐН, ШЕВЧЕНКО полковникӑн, БРОЗГОЛЬ полковникӑн, ДЖИНЧАРАДЗЕ полковникӑн, БОЛЬБАТ полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн ЖИРБУРКУСӐН, РОССЕЛ подполковникӑн, МИРОНОВ полковникӑн, БОЧЕК полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн РЕМИЗОВӐН, ПАХОМОВ полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн РАЙКИНӐН, ГАЕВ полковникӑн, ЯНКО майорӑн, СНЕТКОВ майорӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-лейтенанчӗн ЖДАНОВӐН, авиаци генерал-майорӗн ИЗОТОВӐН, авиаци генерал-майорӗн РУБАНОВӐН, авиаци генерал-майорӗн ГОЛОВНЯН, авиаци генерал-майорӗн КОТЕЛЬНИКОВӐН, авиаци генерал-майорӗн УХОВӐН, ОБУХОВ полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн ЛАКЕЕВӐН, ЧУК полковникӑн, БУДИН подполковникӑн танкисчӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн КОЛЕСНИКОВӐН, ВОЛОДИН полковникӑн, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ГОВОРОВӐН, техника ҫарӗсен генерал-майорӗн КУЗНЕЦОВӐН, ЖУРИН полковникӑн, КЛЮЧНИКОВ полковникӑн, ПОПОВ подполковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн МАТВЕЕВӐН, ТАРУНИН полковникӑн, БЕЛЯНЧИК полковникӑн, НЕКРАСОВ полковникӑн, СТЕПАНЯН полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, МОРАВСКАЯ ОСТРАВА тата ЖИЛИНА хулисене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, апрелӗн 30-мӗшӗнче, 23 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, иксӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 4-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ҫав шутра чехословаксен бригада генералӗ КЛАФАЛЕК ертсе пыракан корпусне, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, МОРАВСКАЯ ОСТРАВА тата ЖИЛИНА хулисене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи апрелӗн 30-мӗшӗ. № 353.

Республика уйхирӗсенче

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. (Телефонпа). Районра ҫураки ӗҫӗ сарӑлсах пырать. Апрелӗн 29-мӗшӗ тӗлне ҫуракине 51 колхоз тухнӑ. Вӗсем 302 гектар сухаланӑ, 71 гектар акнӑ. Ака-суха ӗҫӗсем «Пятилетка», «Память Ленина», Чкалов, Чапаев ячӗпе тӑракан колхозсенче ӑнӑҫлӑ пыраҫҫӗ. «Пятилетка» колхоз 37 гектар сухаланӑ, 16 гектар акнӑ. Чапаев ячӗпе тӑракан колхозри П. Яхтин бригади апрелӗн 28-мӗшӗнче 8 гектар вырӑнне 12.5 гектар сухаланӑ.

П. ТИХОНОВ.

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Телефонпа). Чурашри «Новый быт» колхоз, иртнӗ ҫулсенче юлса пынӑскер, кӑҫал лайӑх ӗҫлет. Ҫуракине районра чи малтан тухрӗ. Ку таринччен 50 гектар сухаланӑ, 45 гектар акнӑ. Колхозниксем ир пуҫласа каҫчenех ӗҫлеҫҫӗ, чылайӗшӗ нормӑна ирттерсе тултараҫҫӗ. А. Николаева, А. Иванов, Р. Сотникова юлташсем, вӑкӑрсемпе сухаласа, нормӑна 140—150 процент тултараҫҫӗ.

Уй-хирте ӗҫлекенсем валли столовӑй уҫнӑ, куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялав тунӑ. Ялава халӗ 2-мӗш бригада тытса тӑрать.

Пахалӑх инспекторӗ А. Кузьмин кам мӗнле ӗҫленине пӗрмаях тӗрӗслесе тӑрать.

С. РУМЯНЦЕВ.

МУРКАШ. (Телефонпа). Чумаккасси ял Советӗнчи «Совет» колхозра комсомолецсемпе ҫамрӑксен вӑйлӑ тырпул звенине тунӑ. Звенора 8 комсомолец. Вӗсене 4 гектар ҫӗр уйӑрса панӑ. Ҫавӑнта вӗсем, комсомол организаци секретарӗ Пиванов ертсе пынипе, 150 лав тислӗк кӑларнӑ. Унсӑр пуҫне комсомолецсем 12 центнер кӗл, 15 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ, 9 плуг юсанӑ.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен звени кӑҫал кашни гектартан 16-шар центнер тырӑ туса илессишӗн тӑрӑшать.

Ф. МАЛЬЦКИН.

Майăн Пĕрремĕшĕ—гитлерла Германие пĕтĕмпех çапса аркатассишĕн кĕрешекен ĕççыннисен кĕрешӳри вăйĕсене пăхса тухмалли кун

Ĕççыннисен çулсерен уявласа ирттерекен праçникĕ—Майăн Пĕрремĕшĕ—1945 çулта пирĕн çĕршывпа пĕтĕм тĕнчен вăрçăпа политика пурнăçĕнче пысăк событисем пулса иртнĕ вăхăтра килет.

1945 çулта пирĕн халăх тата Пĕрлешнĕ Нацисем гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешӳре çĕнĕрен чаплă çĕнтерӳсем турĕç. Хĕрлĕ Çар, ăнăçлăн малалла тапăнса пырса, нимĕçсен оборонине çĕмĕрсе тăкрĕ, вĕсен столицине çавăрса илчĕ, Берлин урамĕсене вăркăнса кĕрсе, çав хула çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартрĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Германи вăтаçĕрĕнче, Торгау хули районĕнче, союзниксен çарĕсемпе пĕрлешрĕç, çапла вара çурçĕр Германири нимĕç çарĕсене Германин кăнтăр районĕсенчи нимĕç çарĕсенчен уйăрчĕç.

Халĕ, пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вĕçленсе пынă чухне тата Пĕрлешнĕ Нацисем фашистла Германие çĕнтерес кун çывхарса çитнĕ чухне, çав çĕнтерĕве алла илес ĕçре Хĕрлĕ Çар аслă та татăклă вырăн йышăнса тăнине никам та хирĕçлеме пултараймасть. Пурте çакна йышăнаççĕ: Совет Союзĕ Пĕрлешнĕ Нацисен пĕрлехи ĕçне чи пысăк парне кӳчĕ, Хĕрлĕ Çар Германин тата унпа пĕр каварлисен хĕçпăшаллă тĕп вăйĕсене çапса аркатрĕ, фашизмăн вăрçă хăватне Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче çапса хуçрĕ.

Хĕрлĕ Çарпа союзниксен çарĕсем пĕрле пыра-пыра çапнине пула, нимĕç çарĕсене вĕсем малтан оккупациленĕ нумай государствăсенчен хăваласа кăларнă. Хĕрлĕ Çар Болгари, Румыни, Венгри, Финлянди, çарĕсене гитлерла çарсенчен пĕтĕмĕшпех тасатса çитерчĕ, мĕнпур Польшăна, Югославипе Чехословакин тата Австрин чылай пысăк пайне, пĕтĕмĕшпе вара пĕр миллион та пилĕкçĕр пин тăваткăл километр ытла çĕре ирĕке кăларчĕ. Кунта Хĕрлĕ Çар, хаяррăн çапăçса пырса, совет çĕрне пĕр миллион та тăхăрçĕр пин тăваткăл километра яхăн гитлерла оккупантсенчен ирĕке кăларнине те шута илсен, пĕтĕм тĕнчипе палăрса тăракан çав историллĕ çĕнтерӳсем татах та аслăнрах та уçăмлăрах куç умне тухса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çар çапла вара 3.400 пин тăваткăл километр ытла çĕре, урăхла каласан, Германин хăйĕн территорийĕнчен çичĕ хут пысăкрах çĕре ирĕке кăларнă. Совет Союзĕн чиккисем леш енчи ирĕке кăларнă çĕр çинче кăна 80 миллион çын ытла пурăнать.

Хĕрлĕ Çар ирĕклĕхе юратакан халăхсене чуралăхран хăтарчĕ, Европăри цивилизацие фашистла нимĕç аркатуçисенчен çăлса хăварчĕ. Çакăнта ĕнтĕ—ССР Союзĕнчи халăхсен этемлĕх историйĕ умĕнчи тава тивĕçлĕ аслă ĕçĕ.

Çав çитĕнӳсенче Ленинпа Сталин тунă совет государствин иксĕлми хăвачĕ, социализмлă строй малта тăракан строй пулни, Ленин идейисен пурне те çĕнтерекен вăйĕ, большевиксен партийĕн тата пирĕн аслă çулпуçăн Сталин юлташăн халăха хавхалантаракан, организацилекен тата ертсе пыракан ĕçĕ палăрса тăрать.

Сталин юлташ тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапма совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çарăн мĕнпур вăйне пĕтĕçтерчĕ, вăл хамăрăн Тăван çĕршыва çĕнтерӳ патне — гитлерла Германие çĕнтересси патне илсе пычĕ.

Хăйĕн пархатарлă тивĕçлĕхне — халăхсене ирĕке кăларакан тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртме Хĕрлĕ Çар ăçтан вăй илет-ха?

Хĕрлĕ Çар—советлă социализмлă государствăн çарĕ пулса тăрать. Совет обществи ирĕклĕ тата нумай енчен вĕренсе хатĕрленнĕ çынсене, совет патриотизмĕн хăвачĕпе хавхаланнă çынсене пăхса çитĕнтерчĕ. Хĕрлĕ Çар воинĕ—социализмлă Тăван çĕршывăн чыслăхĕшĕн, совет государствин ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ăнланса кĕрешекен воин пулса тăрать. Пирĕн чи малта тăракан çар идеологийĕпе хĕçпăшалланнă çар боецăн ăнланулăхĕ тĕлĕшпе, совет çĕршывĕшĕн кĕрешнĕ çĕрте кăтартакан паттăрлăхпа хăюлăх тĕлĕшпе тата Тăван çĕршыва парăнса тăрас тĕлĕшпе тĕнчери мĕнпур çарсенчен чи çӳлте тăрать. Совет стройĕ çынсем хушшинчи çыхăнусене улăштарса çĕнетрĕ, халăхсем хушшинче çĕнĕ, тăванла çыхăнусем туса хучĕ; çав çыхăнусем вĕсем Хĕрлĕ Çарта та уççăн палăраççĕ. Нумай нацилле совет çарĕ тĕнчере нимĕнле çар пек те мар таччăн пĕтĕçнĕ пĕрлĕхлĕ çар пулса тăрать. Çакăнта ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн никам çĕнтерейми вăй-хăвачĕн çăлкуçĕсенчен пĕри. Хĕрлĕ Çар, ăна чи малта тăракан сталинла çар наукки ертсе пынă пирки тăшмана вĕлермеллех пыра-пыра çапакан сталинла ăсталăх ертсе пынă пирки, вăйлă пулса тăрать.

Ытти халăхсен прависемпе ирĕклĕхне хисеплеме вĕреннĕ Хĕрлĕ Çар Европăри халăхсене фашистла нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕнчен хăтăлма пулăшать, çав халăхсене хăйсен государственноçĕпе нацилле никама пăхăнманлăхне çĕнĕрен юсаса ура çине тăратма пулăшать.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ Европăри халăхсем совет воинĕсене, хăйсене ирĕке кăларакансем вырăнне хурса, хавасланса кĕтсе илеççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ ирĕке кăларнă халăхсем аслă совет халăхĕпе союз тума тата туслашма, çав союзпа туслăха чур енчен те çирĕплетме тăрăшаççĕ, çакăнта вĕсем хăйсен ирĕклĕхĕпе хăрушсăрлăхĕн шанчăкне кураççĕ. Çакна ăна нумаях пулмасть ССР Союзĕпе Югослави, тата ССР Союзĕпе Польша хушшинче туслăх, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă договорсем кăтартса параççĕ.

Хĕрлĕ Çар гитлерла оккупантсенчен ирĕке кăларнă государствăсенчи халăхсем демократиллĕ çĕнĕ строй тăваççĕ, демократиллĕ çĕнĕ правительствăсем туса йĕркелеççĕ. Гитлерла пусмăрлăхăн пĕтĕм тискерлĕхне тӳссе ирттернĕ çав государствăсен халăхĕсем хăйсен нацилле интересĕсене сутнă реакцилле правительсене татăклăн сире-сире пăрахаççĕ, сутăнчăксене наказани параççĕ, хăйсен çĕршывĕсенче фашистла реакцие урăх курма шутламаççĕ. Çав çĕршывсенче çуралакан çĕнĕ демократие пĕтĕм халăх массисем пулăшса тăраççĕ, çав демократи фашизма хирĕç, гитлеризма хирĕç кĕрешет. Польша тата Румыни халăхĕсем феодалла-крепосла çĕрĕç йĕркине, хресченсене пусмăрласа тăнăскере тата реакционерсене ĕçлеме лайăх майсем туса панăскере, пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Çав çĕршывсенче туса ирттерекен çĕр реформи хресченсене çĕр парассине пĕлтерет. Çапла вара гитлерла тиранирен ирĕке кăларнă халăхсем фашизмăн тымарĕсене тĕппипех тăпăлтара-тăпăлтара кăлараççĕ, реакцин никĕсне пĕтере-пĕтере хураççĕ. Çавăн пек ĕçсене чылай çĕршывсенче туса ирттернинче ĕççыннисен фашизма хирĕç, реакци вăйĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕнчи пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕхĕ палăрса тăрать.

Гитлерла Германие çапса аркатассишĕн пыракан кĕрешӳре рабочи класăн пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ организацийĕн—Профсоюзсен Пĕтĕм Тĕнчери Федерацийĕн никĕсне хывнă. Ирĕклĕхе юратакан çĕршывсенчи ĕççыннисен çыхăнăвĕ аталанса, çирĕпленсе пыни фашизма пĕтĕмпех пĕтерсе çирĕп çĕнтерӳ тумалли чи паха май пулса тăрать.

Гитлерла Германи хĕçпăшаллă кĕрешӳре вăрçа хăйшĕн усăллă вĕçлеме хăтланни путланса ларчĕ. Анчах та çакă вăл гитлеровецсем кĕрешме пăрахнине пĕлтермест-ха. Гитлерла çарсем Хĕрлĕ Çара хирĕç хаяррăн тăраççĕ. Анчах çавăн пек хирĕç тăнине гитлерла çар хăй çĕнтерессине ĕненнипе ăнлантарса пама çук, çавна ăна фашистсен çарта тата çĕршывра нумай тĕрлĕ централизациленĕ аппарат пурринпе, çавăн пекех тата гитлеровецсем хăйсен фашистла йĕркине мĕнле те пулсан сыхласа хăварма хăтланнипе ăнлантарса пама пулать. «Чи лайăх вăхăтсем иртиччен» пĕтĕм фашистла Германие пулмасан та, Германирен мĕн тăрса юлнине те пулин сыхласа хăварма хăтланакан гитлерла пуçлăхсене фашистла офицерсем, фашистла чиновниксем, эсэсовецсем тата гитлерла режимăн активлăн тăракан ытти çынсем пулăшса тăраççĕ. Вăхăтпа мĕнле те пулин усă курса юлас тесе, гитлеровецсем политикăпа дипломатире çĕнĕ ултавлă ĕçсем туса хăтланаççĕ. Хăйсен провокацилле пропагандипе тата ĕçĕпе вĕсем союзлă государствăсене — ССР Союзĕпе Великобританипе тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе яма хăтланаççĕ. Нимĕçсем пĕр фронта пушатса хăвараççĕ, пулсан, вĕсем пĕр союзнике хирĕç вăрçасшăн мар пулсан, тепĕр союзнике хирĕç вара пĕтĕм вăйĕсене пухса тăратаççĕ пулсан,—вĕсем çакна союзниксем пĕр-пĕринпе хирĕçме пуçлĕç тесе ĕмĕтленсе тăваççĕ. Нимĕçсем Германи промышленноçне тата хăйсен çарĕн чĕрĕ вăйне çăлса хăварма, кайран вара татах вĕсемпе ирĕклĕхе юратакан нацисене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте усă курма ĕмĕтленеççĕ. Анчах опыт фашистсем ирĕклĕхе юратакан халăхсен союзне хавшатма пултарайманнине кăтартса пачĕ, мĕншĕн тесен союзниксем хушшинчи çыхăнусем вăхăтлăха тунă çыхăнусем çинче мар, нумай вăхăтлăха пыракан çирĕп пурнăç интересĕсем çинче никĕсленсе тăраççĕ. Пĕрлешнĕ Нацисен çапăçури туслăхне никам та хавшатма пултараймасть. Çав туслăх вăрçăн хаяр тĕреслевне тӳссе ирттерчĕ.

Крымри историллĕ конференцин ĕçĕсене пĕтĕм тĕнче, ирĕклĕхе юратакан халăхсем фашизма вăрçăра тата моральпе политика тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпех çĕнтерме хатĕр тăнине палăртни вырăнне хурса, хакларĕ. Пĕрлешнĕ Нацисем Германи милитаризмĕпе фашизмне çĕр çинчен шăлса пăрахма кăна мар, Германи урăх нихăçан та халăхсем хушшинчи мире пăсма ан пултартăр тесе, шанчăклă мерăсем йышăнма çирĕп палăртса хучĕç. Çав шутпа, мирпе хăрушсăрлăха упраса тăрас тĕлĕшпе ĕçлеме Пĕтĕм Тĕнчери Организаци тума йышăннă. Çав организацин уставне хальхи вăхăтра Пĕрлешнĕ Нацисен Сан-Францискăри конференцийĕнче сӳтсе-яваççĕ.

Вăрçă тĕлĕшĕнчен пăхсан, Германи лару-тăрăвĕ пачах та шанчăксăр. Çавăнпа та халĕ фашизма хирĕçле идеологи кĕрешĕвĕ уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Германие хирĕç халиччен пулнă вăрçăсен опычĕ çакна кăтартса парать, пĕтĕмĕшпе çапса аркатман Германи хăйĕн вăйĕсене хăвăртах чĕртсе ура çине тăратма пултарать. тăшманăн тĕппипех тăпăлтарса пĕтермен реакцилле идеологийĕ вара хăй-не майлă çĕнĕ çынсене тупма тата çĕнĕ вăрçăсем хатĕрлемелли çăлкуçĕ пулса тăма пултарать.

Çавăнпа та ĕнтĕ фашизма вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен кăна мар, идея тĕлĕшĕнчен те пуçĕпех тата пĕтĕмпех çапса аркатасси историллĕ чи паха задача пулса тăрать. çав задачăна пурнăçа кĕртни вара ирĕклĕхе юратакан халăхсен тĕп интересĕсене хӳтĕленине пĕлтерет.

Пĕрлешнĕ Нацисен халăхĕсем хальхи вăхăтра вăрçăн чи ответлă тапхăрĕсенчен пĕрине пурăнса ирттереççĕ. Кĕрешӳ хăйĕн вĕçленес тапхăрне кĕчĕ. Тăшман чĕрине юлашки хут вĕлермеллех пырса çапасси, вăрçа çĕнтерӳпе вĕçлесси тата пĕтĕм тĕнчере нумай вăхăтлăха çирĕп мир туса хурасси—ирĕклĕхе юратакан Пĕрлешнĕ Нацисен тĕп задачи пулса тăрать.

* * *

Хĕрлĕ Çар историллĕ çĕнтерӳсем туса пынă кунсенче совет халăхĕ Сталинăн кĕрешӳри лозунгĕпе—«Йăлтах фронт валли, йăлтах тăшмана татăклăн çĕнтерес ĕç валли» текен лозунгĕпе пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет, совет çарĕсен çĕнтерӳллĕ наступленине тылри ĕçре çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе пулăшса тăрать.

Пирĕн çĕршыври халăхсем, çав терĕ пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе, Совет государствин экономикăллă вăйне гитлерла Германин экономикинчен çӳлерех çĕклеме пултарчĕç, тăшмана вăрçăпа экономика тĕлĕшĕнчен çĕнтерчĕç. Пирĕн государство вăрçăран тата вăйлăрах та хăватлăрах государство пулса тухать.

Совет экономикин çĕнĕ хăватлă çĕкленĕвне пирĕн промышленноçпа ялхуçалăхĕн 1944 çулхи ĕçĕн итогĕсем кăтартса параççĕ. Пирĕн çар завочĕсем продукци туса кăларассине чылай ӳстерчĕç, хĕçпăшалсемпе боеприпассен тата спаряженин пахалăхне лайăхлатрĕç. Çавăнпа та ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар улăпла операцисем туса ирттерме пултарчĕ, ун пек операцисем Отечественнăй вăрçă историйĕнче тата мĕнпур вăрçăсен историйĕнче те пачах та пулман.

Пирĕн çĕршыв йывăр промышленноçăн ертсе пыракан отраслĕсенче производствăллă пысăк çитĕнӳсем турĕ. 1944 çулта çĕркăмрăк кăларасси, 1943 çулхипе танлаштарсан 31 процент, чугун шăратса кăларасси—31 процент, хурçă шăратасси—29 процент, прокат туса кăларасси—28 процент, электроэнерги парасси—21 процент чухлĕ ӳсрĕ. Продукци туса кăларассине çавăн пек ӳстерме çĕнĕ строительствăна анлăн сарни кирлĕ пулнă. 1945 çул пуçланнă тĕле хĕвелтухăçĕнче çĕнĕрен 10 домна кăмаки, мартен кăмакисем тата электричествăпа шăратакан кăмакасем 43 кăмака, прокатсемпе трубасем тăвакан 21 стан, кокс туса хатĕрлекен 12 батарея çĕнĕрен туса ĕçе янă.

Тĕп продукци туса кăларассине ӳстерес ĕçĕн хăвăртлăхĕ тĕлĕшпе совет çĕршывĕн çар хуçалăхĕ сталинла пилĕкçуллăхсен тапхăрĕ патне, урăхла каласан, мирлĕ вăхăтри условисем патне çывхарать. Совет халăхĕ, хăй вăя хĕрхенмесĕр ĕçлесе, пирĕн социализмлă промышленноçа халиччен курман хăвăртлăхсемпе аталантарса пычĕ.

Пирĕн социализмлă ялхуçалăхĕ те ӳссех пырать. Акакан çĕр лаптăкĕ 1944 çулта, унччenхи 1943 çулпа танлаштарсан, 12 миллион гектар чухлĕ ӳсрĕ, 1945 çулта вăл татах 8.1 миллион гектар чухлĕ ӳсет. Колхозсен фермисенчи майракаллă шултăра выльăхсен йышĕ 9 процент, сурăхсемпе качакасен йышĕ—3 процент, сыснасен йышĕ—8 процент чухлĕ ӳсрĕ. Колхоз хресченĕсем тăрăшнине пула, Хĕрлĕ Çар апат-çимĕç çитменнине курмасть.

«Пирĕн колхоз хресченĕсем тăшмана çĕнтерес ĕçре Хĕрлĕ Çара активлăн тата Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçлĕхне туллин ăнланса тăрса пулăшаççĕ». (Сталин).

Майăн 1-мĕшне совет халăхĕ ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илет. Пирĕн заводсемпе фабрикăсенчи рабочисем Хĕрлĕ Çара планран ирттерсе çĕршер автомашинăсем, танксемпе самолетсем параççĕ. Колхоз хресченĕсем ялхуçалăх ĕçĕсен 1945 çулхи планне пурнăçлама хĕрӳллĕн тытăнчĕç. Пĕтĕм çĕршывра вăйлă тырпулшăн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн ялхуçалăхĕнчи ĕççыннисен Пĕтĕм Союзри социализмлă хăватлă ăмăртăвĕ сарăлса кайрĕ. Чылай облаçсемпе республикăсем ир акмалли тĕштырă культурисене акса пĕтерчĕç те ĕнтĕ.

Совет стройĕн, социализмлă хуçалăх системин хăвачĕ тăшманран ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсаса ура çине тăратас ĕçре уççăн курăнса тăрать. Фашистла ирсĕрсенчен ирĕке кăларнă çĕр çинче совет çыннисем пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле ĕç паттăрлăхĕн тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ, хамăрăн Тăван çĕршывăн çарпа экономика тĕлĕшĕнчи хăватне çирĕплетеççĕ. Совет çĕршывĕн аслă хăвачĕ СССР Верховный Совечĕн XI сессийĕ çирĕплетнĕ 1945 çулхи государство бюджетĕнче яр-уççăн палăрса тăрать.

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пыракан совет халăхĕ хăйĕн вăрçăри тата ĕçри паттăрлăхĕпе социализмлă Тăван çĕршывăн чапне татах та ытларах ӳстерчĕ. вăл тивĕçлипех геройла халăх ятне илчĕ.

Вăрçă опычĕ çакна кăтартса парать: çĕнтерӳ тума хăватлă çарсăр пуçне, лайăх ĕçлекен çар хуçалăхĕсĕр пуçне, вăйлă та пĕрлĕхлĕ халăхсăр пуçне, малта пыракан прогрессиллĕ идеологи те кирлĕ, çав идеологи çарпа халăхăн вăй-хăватне историллĕ тĕрĕс çул кăтартса пыни кирлĕ. Пире фашизма хирĕç кĕрешме хавхалантарса тăракан совет мировоззренийĕ пирĕн халăха çĕнтерӳ патне илсе пычĕ. Ленинла-Сталинла идеологи совет халăхне малашне те кĕрешӳпе ĕçре паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума хавхалантарса пырĕ.

Хамăр çĕршывăн çарпа экономика тĕлĕшĕнчи хăватне малалла та тĕреклетсе пырас тесен, хамăр государствăн хĕçпăшаллă вăйĕсене çирĕплетсе пырас тесен, çав хĕçпăшаллă вăйсем малашне те Тăван çĕршыв интересĕсене хӳтĕлесе тăччăр тесен тата вĕсем кирек мĕнле вăрçă чĕртекенсене хирĕç те чи вăйлă тĕрек пулса тăччăр тесен, мĕнпур совет çыннисем малашне те пĕтĕм вăя хурса ĕçлени кирлĕ.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ ĕççыннисен Пĕтĕм Тĕнчери праçникĕнче—Майăн Пĕрремĕшĕнче эпир çапла калатпăр: мĕнпур совет çыннисем Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме тивĕçлĕ, Тăван çĕршыва усă кӳрес тесе ĕçлени кăна чăн-чăн патриотизмăн пĕрремĕш палли пулса тăрать.

Майăн Пĕрремĕшне эпир кăçалхи çул пирĕн государствăн ашшĕ, большевиксен мухтавлă партийĕн никĕсне хывакан — аслă Ленин çуралнăранпа 75 çул тултарнă кунсенче уявласа ирттеретпĕр. Çак кунсем, Хĕрлĕ Çар фашистсен çарĕсене аркатса тăкас ĕçе вĕçлесе пынă кунсем, пирĕн совет халăхĕшĕн кăна мар, пирĕн вăхăтри малта пыракан мĕнпур çынсемшĕн те аслă уяв кунĕсем пулса тăраççĕ.

Ленинпа Сталин большевиксен партине турĕç, вăй тĕлĕшĕнчен тата малтине витĕрех курса тăрас тĕлĕшрен пирĕн партипе урăх нимĕнле парти те танлашма пултараймасть. Большевиксен партине пуласлăха темиçе вунă çул малтан курса тăма пĕлекен чи аслă çынсем туса çитĕнтернĕ.

Ленинпа Сталин социализмлă государствăна туса çитĕнтернĕ. Вăл Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен туслăхĕ çинче никĕсленсе тăрать. Пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра совет çĕршывĕ тӳссе ирттернĕ пек тĕрĕслеве тĕнчере урăх пĕр çĕршыв та тӳссе ирттермен. Совет государстви çав тĕрĕслеве чыслăн тӳссе ирттерчĕ. Апла пулсан, совет государствине истори тĕлĕшĕнчен çирĕп никĕс çине хывнă, çав никĕсе нимĕнле çил-тăвăлсем те хавшатма пултараймарĕç, пултараймаççĕ те.

Совет халăхĕ тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерес кун умĕнче тăрать. Эпир кĕрешӳре тата çĕнтерӳрен çĕнтерӳ патне йăтса пыракан ялав çине Ленинпа Сталин ячĕсене çырса хунă.

Ленин ялавĕпе, Сталин ертсе пынипе —малалла! Гитлерла Германие татăклăнах çĕмĕрсе тăкассишĕн, хамăрăн Тăван çĕршывăн çарпа экономика тĕлĕшĕнчи хăватне тĕреклетсе пырассишĕн—малалла!

Май уявне—производствăллă парне

Пирĕн республика 1944—45 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра чугун çул транспортне вутă хатĕрлесе парас тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕ. Иртнĕ сезонра вутă турттарса памалли плана 101 процент тултарчĕ. Çавăншăн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 250 000 тенкĕ премине памалла тунă.

Чугун çул транспортне вутă хатĕрлесе парас тĕлĕшпе уйрăмах республикăри вăрман сыхлакан Управлени (начальникĕ Яковлев юлташ) лайăх ĕçленĕ. Управлени хăйĕн сезонри планне 111 процент тултарнă. Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем авиаци промышленноçĕ валли хырпа хурăн планран ирттерсе хатĕрлесе панă.

Уйрăм предприятисенчен Вăрнар вăрманпромхозне (директорĕ Непримеров юлташ) тата Çĕмĕрле вăрман хуçалăхне (директорĕ Матвеев юлташ) палăртмалла. Вĕсем сезонри плана пур ĕçсем тăрăх та ирттерсе тултарнă.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинат коллективĕ Май уявне апрельри программăна срокчен тултарнипе кĕтсе илчĕ. Никитенко, Московченко тата Бабенков юлташсем начальник пулса тăракан цехсем уйăхри планран ирттерсе продукци чылай туса кăларнă. Комбинатăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тытакан цех та (начальникĕ Павлов юлташ) уяв умĕнхи ăмăртура лайăх ĕçленĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисенчен Сергунин юлташăн бригади малта пырать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем малалла тапăнса пынă, апрелĕн 29-мĕшĕнче **АНКЛАМ, ФРИДЛАНД, НОЙБРАНДЕНБУРГ, ЛИХЕН** хулисемпе çулсен паха узелĕсене туртса илнĕ. **МЕКЛЕНБУРГ** провинцине кĕрсе кайнă, çавăн пекех тата **ЮКЕРМЮНДЕ, МЕНКЕБУДЕ, РОЗЕНХАГЕ, ДУХЕРОВ, ПУТЦАР, ШЕНБЕК, ВОЛЬДЕГГ, КЕЛЬПИН, БУРГ-ШТАРГАРД, ГРАМБЛОВ, ГАНДЕМИТЦ, ХАММЕЛЬШПРИНГ** ятлă пысăк ялсене йышăннă. Апрелĕн 28-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ тата 106 хир туппи тытса илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем **БЕРЛИН** урамĕсенче çапăçнă, хулан **МОАБИТ** районне, Ангальт вокзалне туртса илнĕ тата хулан вăтаçĕрти пайĕнче 170 квартал йышăннă. **БЕРЛИНРАН** çурçĕртерехре фронт çарĕсем **ИОХИМСТАЛЬ, ГРОСС-ДЕЛЛЬН, ГРОСС-ШЕНЕБЕК, КЛАНДОРФ, МАРИЕНВЕРДЕР, ВЕЗЕНДОРФ, ЛИБЕНТАЛЬ, ХАММЕР, ЛИБЕНВАЛЬДЕ** ятлă пысăк ялсене çапăçса туртса илнĕ. Апрелĕн 28-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче **БЕРЛИНРА** фронт çарĕсем 6.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—83, хир тупписем — 150, пулеметсем—480, автомашинăсем —2.500, паровозсем—139, чугун çул вагонĕсем—3.090, çар пурлăхĕн склачĕсем —30.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем **БЕРЛИНĂН** кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи урамĕсенче çапăçнă, хулан **ВИЛЬМЕРСДОРФ** районĕн кăнтăр пайне **БЕРЛИНЕР ШТРАССЕ** таран, округри чугун çулăн **ГОГЕНЦОЛЛЕРНДАММ** тата **ХАЛЕНЗЕЕ** чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. Апрелĕн 28-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче ку районра фронт çарĕсем 5.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

БЕРЛИНРАН кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре. **ВЕНДИШ-БУХГОЛЬЦ** ялĕ районĕнче **БЕЛОРУССИРИ** 1-мĕш фронт çарĕсемпе **УКРАИНĂРИ** 1-мĕш фронт çарĕсем хупăрласа илнĕ нимĕç çарĕсен ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Апрелĕн 28-мĕшĕпе 29-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче ку районра пирĕн çарсем 40.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, вăл шутра 34.000 салтакпа офицера ытла **БЕЛОРУССИРИ** 1-мĕш фронт çарĕсем илнĕ.

Чехословаки çĕрĕнче, **БРНО** хулинчен хĕвелтухăçнерехре, **УКРАИНĂРИ** 2-мĕш фронт çарĕсем малалла тапăнса пынă, **БОРШИЦЕ, ОСВЬЕТЫМАНЫ, БРЖЕСВИЦЕ, ПЕХВАЛИН, ЛОВЧИЦЕ, ЖДЯНИЦЕ, БУЧОВИЦЕ, ОРЛОВИЦЕ, МОРАВСКИ ПРУСЫ, ДРНОВИЦЕ** ятлă пысăк ялсене çапăçса туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Апрелĕн 28-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 50 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 17 самолетне персе ӳкернĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен çарĕсем Мюнхена пырса кĕресси 32 километр юлнă. Союзниксен çарĕсем Мюнхен хулине анлă пĕкĕпе çавăрса илеççĕ, ку пĕкĕ çурçĕр енчен кăнтăр-хĕвеланăç еннелле пырать. Шварцвальд вăрманĕнчи «михĕре» нимĕçсем хирĕç тăрасси пуçĕпех пĕтсе ларнă.

Приморски Альп тăвĕсен секторĕнче союзниксен çарĕсем Лигури тинĕсĕнчен пуçласа 80 километр сарлакĕш участок çинче Итали чиккине тухнă. Хăшпĕр вырăнсенче союзниксем Итали çĕрне 16 километр таран кĕрсе кайнă.

Апрелĕн 26-мĕшĕнче союзниксем Хĕвеланăç фронтĕнче 57.535 нимĕçе тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен çарĕсем Мюнхенран 11 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан Дахау çывăхĕнчи концентрацилле лагере йышăннă. Унта хупнă 30.000 çынна яхăн ирĕке кăларнă. Мюнхенпа Ландсхыт хушшинчи Моосбергри лагерьте акăлчансемпе американецсен тыткăна лекнĕ 27.000 çыннине ирĕке кăларнă. Союзниксен танковăй отрячĕсем Мюнхенпа пĕрлешсе ларнă ялсене çитнĕ.

Пĕлтерӳре союзниксем Обер-Амергау хулине йышăннине çирĕплетсе панă. Союзниксем хăйсен Австрири плацдармне аслăлатнă.

Боден кӳллин хĕвелтухăç енчи вĕçĕнче союзниксем 40 километр сарлакĕш фронтпа кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле куçнă.

Апрелĕн 28-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем 74.986 çынна тыткăна илнĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсен 15-мĕш армейски ушкăнĕн чаçĕсем пĕтĕмĕшпех Адидже шывĕ урлă каçнă. Брешиа хулипе Бергамо хулисене тытса илнĕ. Генуя хулинче тăшман хирĕç тăрасси пĕтсе ларнă. Монте-Моро хулинчи гарнизон пĕр талăк хушши хирĕç тăрса çапăçнă, анчах халĕ вăл та парăннă. Генуя хулинче 6.000 нимĕçе тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Милан хулине кĕнĕ.

МУССОЛИНИЕ, ФАРИНАЧЧИЕ, ПАВОЛИНИЕ, СКОРЦА ПЕРСЕ ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Римран пĕлтернĕ тăрăх, Римра Милан хулинчен панă радиона итленĕ. Миланри радио çапла пĕлтернĕ: Итали патриочĕсем Муссолинине тата фашистсен ытти пуçлăхĕсене персе пăрахнă. Миланри радио пĕлтернĕ тăрăх, персе пăрахнисем хушшинче çаксем пур: фашистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Алессандро Паволини, фашистсен партийĕн секретарĕ пулнă Карло Скорца тата Муссолини еркĕнĕ Клара Петачи.

ЛОНДОН, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Итали патриочĕсем Муссолинипе пĕрле ярса тытнă фашистсен пуçлăхне Фариначчие, Итали патриочĕсен приговорĕ тăрăх, халăх умĕнче персе пăрахнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Римран пĕлтернĕ тăрăх, радио çапла пĕлтернĕ: Муссолини виллине тата персе пăрахнă ытти фашистсен виллисене те Милан хулинчи Пьяцца Лорето площадьне кăларса лартнă.

Пĕрлешнĕ Нацисен Сан-Франциско хулинчи конференцийĕнче

АПРЕЛĔН 27-МĔШĔНЧИ ПĔРЛЕХИ ЛАРĂВĂН ДНЕВНИКĔ

САН-ФРАНЦИСКО, апрелĕн 27-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Апрелĕн 27-мĕшĕнче Сан-Франциско хулинчи конференцин пĕрлехи ларăвĕнче ертсе пыракан комитет Украинăпа Белоруссин Советлă республикисене мирпе хăрушсăрлăха сыхламалли пĕтĕм тĕнчери организацие пуçаракансемпе унăн малтанхи членĕсем пулма чĕнни çинчен пĕрсасăлăн ырланă. Конференцири пĕр пысăк çын каланă тăрăх, çакă ĕнтĕ Украинăпа Белоруссин Сан-Франциско хулинчи конференцие хутшăнма пултарассине пĕлтерет. Ертсе пыракан комитет Украинăпа Белоруссин республикисем пирки тунă сĕнĕве делегатсем алă çупса йышăннă.

Пĕрлехи ларура çавăн пекех конференцин исполнительнăй комитетне тăвасси çинчен ертсе пыракан комитет сĕннине ырланă. Исполнительнăй комитета Австрали, Бразили, Канада, Чили, Китай, Чехословаки, Франци, Иран, Мексика, Голланди, СССР, Пĕрлешӳллĕ Королевство, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Югослави делегацийĕсен руководителĕсем кĕреççĕ. Кунсăр пуçне, пĕрлехи ларура çакăн пек резолюцие ырланă: Пĕрлешнĕ Нацисен правительствисем Польша халăхне кăмăлланине тата унпа савăннине пĕлтереççĕ, çавăн пекех тата Польшăн гавата держава-организаторсем йышăнма пултаракан правительствине туса хурассине, çавна пула вара Польша делегацийĕ конференцие хутшăнма Сан-Франциско хулине килсе çитессине шанаççĕ.

Пĕрлехи ларура тата ертсе пыракан комитетăн çак сĕнĕвне ырланă: тăватă председатель пĕрлехи ларура черетпе председатель пулмалла. Ертсе пыракан тата исполнительнăй комитетсен председателĕ пулма Стеттиниуса лартмалла, ытти председательсем вара хăйсен прависене Стеттиниуса памалла.

Делегатсем конференцире каласмалли официальнăй чĕлхесем вырăнне акăлчан, вырăс, француз, китай тата испани чĕлхисем пулмалли çинчен калакан резолюцие ырланă. Анчах та пĕрлехи ларусенче яланхи чĕлхе вырăнĕсенче акăлчанпа француз чĕлхисем шутланаççĕ. Ларура çавăн пекех тата ертсе пыракан комитет конференцин кун йĕрки пирки йышăннă резолюцие те ырланă. Вăл кун йĕркине Думбартон-Окса йышăннă сĕнӳсем, Крымри конференцире тунă тӳрлетӳсемпе пĕрле, çавăн пекех тата Китай правительстви тунă сĕнӳсем кĕреççĕ, çав сĕнӳсене организаторсем пулса тăвакан держава ырланă. Сан-Франциско хулинчи конференцин яланхи секретарьне США государство департаменчĕн представительне Хиса лартасси çинчен ертсе пыракан комитет тунă сĕнĕве йышăннă.

Ертсе пыракан комитет ячĕпе Куба делегацин пуçлăхĕ, США-ри Куба посолĕ Бельт доклад туса панă. Вăл комитет тунă сĕнӳсем çинчен каласа панă.

Ертсе пыракан комитетăн асăннă сĕнĕвĕсене тата ыттисене те пĕрлехи ларура пĕр сăмах хирĕç каламасăр ырланă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00094 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000